**Пурнăça, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!**

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 140 (4709) *1998 çулхи декабрь (раштав) уйăхĕн 9-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

# Тĕслĕх илмелли пур

## (районти семинар-канашлуран)

***Нумаях пулмасть хулапа район администрацийĕнче хуçалăхсен, агропромышленность комплексĕн ĕçлесе хатĕрлекен тата тивĕçтерекен предприятийĕсемпе организацийĕсен ертÿçисем, администраци пайĕн заведующийĕсем, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн тĕп специалисчĕсем хутшăннипе семинар-канашлу иртни çинчен маларах пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ.***



Канашлăва уçнă май, администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин калаçу çивĕч пуласси çинчен асăрхаттарчĕ, ăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн 11 уйăхри итогĕсене халалланăччĕ. Отрасльти кăтартусем чăнах та тĕлĕнтереççĕ, шухăша яраççĕ. Кăçал çанталăк условийĕсем пур хуçалăхшăн та пĕр пек пулчĕç, çавăнпа та результачĕсен уйрăмлăхĕ пысăк пулмалла мар пек. Анчах та ĕçсем пачах урăхла. Администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн Ю.В.Терентьевăн информацийĕнчен, çаплах пуçлăх комментарийĕнчи цифрăсемпе фактсенчен пĕр пек условисенчех тăрăшсан ĕçе йĕркеллĕ илсе пыма пулассине, тĕреклĕ хуçалăха та ним шухăшламасăр салатса яма пултарни курăнать. "Надежда" агрофирмăра пулса курса семинара хутшăннисем хальхи кăткăс лару-тăрура та ĕçе чăн-чăн хуçа пек пурнăçласан выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ăнăçлăхсем тума, наука чĕлхипе каласан вара çак отрасле анлăлатма та пулать. Çак хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх корпусĕсенче йĕркелĕх хуçаланни çинчен, выльăхсене пăхмалли тата апатлантармалли технологин требованийĕсене çирĕп пăхăнни çинчен тепĕр хут асăнмастпăр ĕнтĕ, ун çинчен хаçатра пĕрре кăна мар çырнă. Хăшпĕр самантсем çинче çеç чарăнар.

Пĕлетĕр ĕнтĕ, агрофирма икĕ пысăк хуçалăх пĕрлешнипе йĕркеленнĕ: сĕт суса илес тĕлĕшпе малти вырăнсене йышăнакан Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциаци тата сысна ĕрчетессинче ăнăçлăхсем тăвакан Кузнецов ячĕпе хисепленекен хуçалăх. Малтанхи пекех, хальхи вăхăтра та хуçалăх кооперативĕсенче тата отрасльсенче те пысăк уйрăмлăх палăрмасть - мĕнпур фермăсенче хуçан çирĕп алли туйăнать. Выльăхсене кăкарса усрамалли меслетпе, çаплах кăкармасăр тытаççĕ, ĕнесене пăрулаттармалли уйрăмсенче йĕркелĕх хуçаланать, пĕрремĕш талăкра пăрусем амăшĕ çумĕнче юлаççĕ (кунта та сивĕ меслетпе усă кураççĕ), кайран вĕсене майĕпен сивĕ çĕре куçараççĕ. Çамрăк выльăха ÿстерсе çитĕнтерекен тата самăртакан ушкăнсенче кăкармасăр усрани те лайăх результатсем тума май парать. Пĕтĕ пушмаксене пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Сăвакан ĕнесен кĕтĕвне çĕнетекен çак выльăхсене ытти хăш-пĕр хуçалăхри пек начар пăхмаççĕ, пачах урăхла, ятарлă рационпа апатлантараççĕ, уйрăм витесенче тытаççĕ. Унсăр пуçне, ĕçе кооперативсем хушшинче специализациленĕ хыççăн, вĕсенчен пĕрне пушмак пăрусем çитĕнтерме шаннă (Сăмах май каласан, хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăх хăй вăхăтĕнче çак тĕлĕшпе тĕллевлĕ ĕç илсе пынă, çавăнпа та вĕсен опыт пысăк). Кунта ĕçе тĕплĕ, лайăх пурнăçланине кооперативсем хушшинче яланах тĕрĕслевсем ирттернипе, опытпа улшăннипе те ăнлантарса пама пулать пулĕ. (Хăш-пĕр хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен кунне юлашки хут хăçан ирттернине те астумаççĕ пулĕ, вĕсене вара кашни уйăхра ирттермелле).

Сысна ĕрчетесси тупăшлă отрасль пулнине асра тытса, "Надежда" ĕçченĕсем кунта та ĕçе лайăх шухăшласа, пĕлсе илсе пыма тăрăшаççĕ. Унта тăкаксене хирĕçле механизма хута яни çинчен эпир çырнăччĕ ĕнтĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

# Декабрĕн 12-мĕшĕ Хула кунĕ

***Нурлатра пурăнакан хисеплĕ ентешсем, декабрĕн 12-мĕшĕнче ипподром территорийĕнче Хула кунне халалланă пысăк уяв пулать.***




**Программăра:**

**1. Уява чаплă лару-тăрура уçни.**

**2. Спорт ăмăртăвĕсемпе илĕртÿллĕ вăйăсем.**

**3. Раççейри Мускав, Хусан, Анат Кама, Çыранçи Чаллă, Тольятти, Ижевск, Ульяновск, Самар хулисенчи чи вăйлă спортсменсем хутшăннипе Нурлат хулин парнине илессишĕн автомобильсен хĕллехи ăмăртăвĕ. Унтан старта "Бурансем" тухĕç (кăмăл пуррисем заявкăсем пама пултараççĕ).**

**4. Нурлат райповĕ, "Нурлатнефть" НГДУ, чугун çул, вăрман хуçалăхĕн ОРСĕсем, обществăлла апатлану предприятийĕсем, çаплах районти хуçалăхсемпе предприятисем, уйрăм предпринимательсем хутшăннипе ярмăркка.**

**Виçĕ лаша кÿлнĕ çунапа ярăнасси, унта чи вăйлă чупакан лашасене палăртĕç. Çаплах ярмăрккăра таварсен тата апат-çимĕçсен анлă ассортиментне тăратнă суту-илÿ организацийĕсемпе хуçалăхсене тата илемлĕ капăрлатнă суту-илÿ речĕсене палăртĕç.**

***Уяв ирхине 9 сехетре пуçланать.***

***Пĕр кун маларах, декабрĕн 11-мĕшĕнче автомобильсен ăмăртăвне хутшăнакансене суйласа илмелли ăмăрту пулать.***

***Нурлатра пурăнакансемпе хăнасем!***

***Хула кунне сире ырă сунса кĕтетпĕр.***

## Кун йĕркинче - уява хатĕрлесси

Иртнĕ шăматкун хулари предприятисен, организацисемпе учрежденисен ертÿçисем хутшăннипе "Хула кунĕ" ирттерес тĕлĕшпе ĕçлĕ канашлу пулса иртнĕ, ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев ертсе пынă. Уява хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.Х.Абдуллин каласа панă. Канашлура хĕллехи çак уява мĕнпур енчен хатĕрленессине, кирлĕ шайра йĕркелессине тепĕр хут палăртнă, çаплах кулленхи ыйтусене пăхса тухнă, уяв мероприятийĕсене хушăмсем кĕртнĕ.

## Сцена çинче - пирĕн ентеш

Декабрĕн 10-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче пирĕн ентеш, композитор тата юрăçă Рамиль Мифтахов хăйĕн концерт бригадипе нурлатсене савăнтарĕ. Концерт 19 сехетре пуçланать. Билет хакĕ 10 тенкĕ. Инвалидсен вунăкунлăхне шута илсе Рамиль концертра пуçтарăннă укçан пĕр пайне районти инвалидсене пулăшу паракан фонда куçарма шутлать.

## Канмалли кунсем çывхараççĕ

Кăçал декабрĕн 12, 13 тата 14-мĕшĕсем кану кунĕсем пулĕç.

Декабрĕн 12-мĕшĕнче Раççейре Конституци кунне палăртаççĕ. Вăл шăматкунпа тĕл килет, çапла майпа пĕр вăхăтрах уяв кунĕ те, канмалли кун та пулать. Раççей КЗоТпе килĕшÿллĕн çакăн пек чухне канмалли куна уяв хыççăнхи ĕçлемелли куна, тунтикуна, декабрĕн 14-мĕшне, куçараççĕ.

Çапла майпа кăçал декабрĕн 12,13 тата 14-мĕшĕсем канмалли кунсем шутланаççĕ.

***Раççейре, тĕнчере***

## Аллă çул тултарнине халалланă

Нумаях пулмасть пирĕн çĕршывра Пĕтĕм тĕнчери информатика кунне паллă тунă. Çакна май Мускавра информатизацин Тĕнчери çиччĕмĕш форумĕ уçăлнă. Ăна Америкăри патшалăхсен пĕрлĕхĕ аллă çул тултарнине халалланă. Пĕтĕм тĕнчери информатизаци академийĕн Мускаври штаб-хваттерĕнче çавăн пекех савăнăçлă лару та иртнĕ.

Хальхи вăхăтра çак академи йышĕнче 550 ытла уйрăм шутланать, вĕсенче вун икĕ пин çурă ученăй вăй хурать. Форум ПНО (Пĕрлешнĕ Нацисен организацийĕ) пулăшнипе иртет.

## Тăванла пулăшу параççĕ

Раççейĕн çурçĕр пайĕнче пуранакансене юлашки вăхатра Норвеги, Швеци тата Финлянди çĕршывĕсем пулăшаççĕ. Сăмахран, Швецири Хапаранда хули Мурманск облаçĕнче Ковдор хулипе тăванла çыхăнусем йĕркеленĕ. Кÿршĕ çĕршыв, пĕтĕмĕшле илсен, апат-çимĕçпе куллен кирлĕ ытти таварпа пулăшать. Социаллă пурнăçри тата экономикăри йывăрлăхсем пирĕн çĕршывра ытларах сахал тупăш илекен çемьесене, пенсионерсене пырса тиврĕç. Çавăнпа та Мурманск облаçĕнче те чи малтан çакнашкал çынсене пулăшу параççĕ. Кăçалхи шартлама сивĕсем ытла ир пуçланчĕç, апла тăк тăванла пулăшу питĕ вăхăтлă пулчĕ.

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă. Хаçат хакĕ - **25 тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тÿлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

**Çапла, хаçат çырăнтарасси малалла пырать, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

# Тĕслĕх илмелли пур

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Халь çак отрасльте специализаци меслечĕпе усă курнине çеç асăнса хăвараттăр. Хуçалăхри чи инçе вырнаçнă Единени поселокĕнчи йывăç витере 150 пуç выльăх вырнаçтарнă, çитес çывăх вăхăтра вĕсен шучĕ икĕ хут ўсĕ. Çакă кунти çынсене ĕçпе тивĕçтерме май панă, иккĕмĕшĕнчен вара кунти арманти сăсăла вырнаçтармалли вырăн та пур.



Хуçалăхра выльăх ĕрчетес ĕçе чи малтан малашнехи çинчен шутласа йĕркелеççĕ, çўлерех те асăннăччĕ ĕнтĕ, лайăх йăхпа тивĕçтерме пултаракан ăратлă ĕнесен ушкăнне çĕнетессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Тĕслĕхрен, декабрь-январь уйăхĕсенче 150 ĕне пăрулĕ. Çулталăк пуçламăшĕнче пĕтĕлентермелли пушмак пăрусене шута илсен, хуçалăхра сăвакан ĕнесен кĕтĕвĕ 25 процент çĕнелни паллă. Çапла, кунта ĕçе наукăри пек лайăх шутласа илсе пыраççĕ.

Хуçалăхра юлашки результатсемшĕн тăрăшнине семинара хутшăнакансем ытти тĕслĕхсем курса та ĕненчĕç, анчах та кун çинчен каярах калаçăпăр. Халь вара - выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессин тĕреклĕхне çирĕплетмелли эффективлă мерăсем çинчен. Унта темиçе тĕп самант пур. Вĕсенчен чи кирли - выльăхсен йышне чакармалла марри. Ĕçе интенсификацилесси çинчен мĕн чухлĕ каласан та, хальхи вăхăтри условисенче экстенсивлă меслете шута илменни усăсăр пулĕ. Çавăнпа та выльăхсен, чи малтан сăвакан ĕнесен йышне сыхласа хăварассине тĕп тимлĕх уйăрмалла. Мĕн каласан та, хальхи вăхăтра хуçалăха тытма пĕлмесĕр, ĕçе хăйсене тĕллĕн йĕркесĕр илсе пынипе выльăхсен кĕтĕвĕ çухаласси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. (Пĕр хуçалăхра вăл мĕн патне илсе çитерни çинчен эпир çырнăччĕ ĕнтĕ). Шел пулин те, хăш-пĕр хуçалăхра çакăн пеккине тĕл пулма тўр килет çав. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан кăçалхи 11 уйăх хушшинче районта мăйракаллă шултра выльăх йышĕ 2,5 пин пуç ытларах чакнă, çав шутра сăвакан ĕнесен йышĕ 153 пуç. Темиçе хут асăрхаттарнине пăхмасăр ноябрь уйăхĕнче те выльăх йышĕ чылай чакнă. Çулталăк пуçламăшĕнчен тытăнса хресченсен хуçалăхĕсен "Урняк" тата "Черемшан" ассоциацийĕсенче, сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнче мăйракаллă шултра выльăх йышĕ чылай чакнă, вĕсенчен иккĕмĕшĕнче тата "Чулпанта" юлашки уйăхра кăна выльăхсен йышĕ 166-185 пуç чакнă. Паллах ĕнтĕ, объективлă сăлтавсем те пур, анчах та выльăхсен йышне çавăн чухлĕ чакарни ĕçе шутламасăр пурнăçланин результачĕ пулса тăрать.

Акă, "Дуслык" тата "Киклĕ" хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăх йышне ўстерме пултарнă, хăш-пĕр хуçалăхсенче вара ноябрь уйăхĕнче выльăхсен йышĕ чакассине чарнипе пĕрлех ăна ўстернĕ. Ку чи малтан вилекен выльăхсен шутне чакарнин тата çамрăк выльăх илессине ўстернин результачĕ. Кун çинчен хаçатра уйрăм калаçу пулĕ. Паян вара сыснасен шутне ўстерес тĕлĕшпе кам тата мĕнле ĕçлени çинчен калаçăпăр. Ку тĕлĕшпе районта ĕçсем ытла япăх мар, çулталăк хушшинче сыснасен шучĕ 3400 пуç ўснĕ теме пулать. Анчах сысна йышĕ, тĕпрен илсен, темиçе хуçалăха пула кăна ўснине палăртмалла, уйрăммăн илсен, Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Татарстан" хуçалăхсем, "Надежда" агрофирма шучĕпе. Çав вăхăтрах "Киклĕ", "Заветы Ильича", "Чулпан", "Алга" хуçалăхсем чылай кая юлаççĕ. Кунтан тĕлĕнмелли çук, мĕншĕн тесен вĕсенчен пĕрремĕшĕпе юлашкинче çулталăкра пĕр амаран вăтамран 1,72-2,56 çура илнĕ, çак кăтарту ытти хуçалăхсенче те районти вăтам кăтартуран пĕчĕкрех. Çапах çакăн пек условисенчех "Черемшан" агрофирмăра (тĕпрен илсен, Салтакъелĕнчи уйрăмра) тата Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен хуçалăхра пĕр амаран 11,5-12,5 çура илеççĕ. Çав вăхăтрах пĕр амана икĕ хут çăвăрлаттарса та пурĕ 3 çура кăна илнĕ хуçалăхсем те сахал мар. Ку сысна пăхакансене натурăпа тўлемелли система çук çĕрте пулать. Çак системăпа тăхăр хуçалăхра халиччен те усă курмаççĕ-ха.



Выльăхсем нумай вилнĕ хуçалăхсен ертўçисене те канашлура явап тытма тўр килчĕ. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан кăçал ĕçсем ку тĕлĕшпе кăшт лайăхланнă ĕнтĕ, çапах та хăш-пĕр хуçалăхсенче выльăхсене лайăхрах пăхнă пулсан кăтартусем те пысăкрах пулĕччĕç.

Çаксем сысна ĕрчетессинче тата продукцие патшалăха сутассин кăтартăвĕсенче палăраççĕ. Хуçалăхсем сĕт мĕн чухлĕ суса илни тата сутни çинчен хаçатра тăтăшах пичетлеççĕ.

Канашлура патшалăха аш-какай сутас тĕлĕшпе ĕçсем япăх пулни çинчен çивĕч калаçу пулчĕ. Хуçалăхсем патшалăх чи йывăр вăхăтра тавар кредичĕ йĕркипе уйăрса панă çунтармалли-сĕрмелли материалсемпе пурăнаççĕ пулин те, ял çыннисем патшалăха аш-какай сутма васкамаççĕ (кунта та ГСМсăр май çук!). Аш-какая ытти çĕре ăсатакан хуçалăхсен ертўçисене çакăн çинчен тĕплĕн шухăшлани кансĕрлемĕччĕ. Пуррине тăкаклама çăмăл, упрама тата ўстерме чылай йывăртарах. Çакна май Ф.С.Сибагатуллин хуçалăхсен ертўçисене тĕслĕх вырăнне "Надежда" агрофирмăна илсе кăтартрĕ, кунта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç лайăх пырать, ытти отрасльсене те тимлĕх уйăраççĕ. Тĕслĕхрен, Единени поселокĕнче макарон изделийĕсем туса кăларакан цех ăнăçлă ĕçлет, вăл, пĕрремĕшĕнчен, хуçалăха экономика тупăшĕ парать, иккĕмĕшĕнчен, темиçе çĕнĕ ĕç вырăнĕ тăвать, виççĕмĕшĕнчен, ăна пула хуçалăх кассинче "чĕрĕ" укçа пур.

Тата. Пĕлтĕр мичуринецсем тĕштырă технологийĕпе акса ўстернĕ кукурузăпа ăста усă курнă. Кăçал та çапла тунă (сăнўкерчĕкре). Çавăнпа та концентрациллĕ апат дефицит пулнă вăхăтра кукуруза пысăк пулăшу парать. Мĕн тусан та, пурне те халăхшăн тăрăшса тăваççĕ, çапла пулмалла та, администраци пуçлăхĕ т... çакна уйрăмах палăрт...са market каларĕ. Çав "Надеждăрах" ял çыннисене ĕç укçи тўлеме те майсем тупаççĕ, хальхи йывăр вăхăтра та Ял хуçалăх ĕçченĕсен кунне чаплă паллă тунă. Çыншăн тăрăшсан, тимлĕх уйăрсан вăл та, паллах, тўрĕ кăмăлпа ĕçлет. Çакă вара хуçалăха та, ял çыннисене хăйсене те усă парать.

Кĕскен каласан, çак семинар-канашлу хуçалăхсен ертўçисене шухăша яма тивĕç, мĕншĕн тесен семинарта тĕслĕх илмелли пурччĕ. Юлашкинчен администраци пуçлăхĕ çакăн пек семинарсене ытти хуçалăхсен бази çинче те ирттерме шутланнине пĕлтерчĕ. Çакă вара ыттисен те лайăхрах ĕçлеме тытăнмаллине пĕлтерет.

Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.

Н.Азизов сăнўкерчĕкĕсем.

* Чăваш Ен хыпарĕ



*Михаил Лапина яланах шанма пулать. Ăна ĕç шанса парсан вăл пурнăçласса пĕлсех тăратăн. "Нурлатнефть" НГДУ УТТне водитель 18 çул каярах килнĕ, çирĕп дисциплина хуçаланакан коллективпа пĕр чĕлхе тупнă. Нумай çул хушши плетьевозпа ĕçленĕ, икĕ çул каялла технологи транспорчĕн управленийĕ çĕнĕ техниика туянсан вара тăрăшуллă Лапина çĕнĕ самосвал панă. Ĕçчен те ўркенменскер - вăхăт иртнĕçем опыт та пухнă - вăл хăйĕн КамАЗĕпе черетлĕ рейса Димитровграда е Чистая каймa ялан хатĕр. Строительство материалĕсем турттарать - унăн тиевĕ ялан кирлĕ.*

*Н.Азизов сăнўкерчĕкĕнче: УТТ 1-мĕш номерлĕ автоколонна водителĕ М.Лапин.*

## Музейри тĕл пулусем

Чăваш наци музейĕн курав керменĕнче чăваш интеллигенцийĕн клубĕ ĕçлеме пуçларĕ. Унăн тĕллевĕ - пултаруллă чăвашсен /искусство, наука ĕçченĕсен/ ĕçĕ-хĕлĕпе паллашасси. Тĕл пулусем уйăхне пĕр хутчен чăвашла иртеççĕ.

Пĕрремĕш тĕл пулура Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультечĕн студенчĕсем, Г.Лебедев ячĕллĕ чăваш наци музейĕн филологи класĕ тата тĕрлĕ çулсенчи искусство, наука ĕçченĕсем пулчĕç.

Акă, авалхи сĕтел-пуканпа илемлетнĕ пўлĕм шăплăхне тĕлĕнмелле çывăх сасă татрĕ. Çак шухăшлав сăввисен хуçи пулчĕ те ĕнтĕ пирĕн клубăн пĕрремĕш хăни, Чăваш телевиденийĕн редакторĕ, Чăваш çамрăкĕсен патшалăх премийĕн лауреачĕ Марина Карягина поэтесса. Яштака пўсиллĕ, пытарăнчăк туйăмлă, хăйне еврĕлĕ Марина, çамрăк пулин те, унăн "шалта" пиçсе, туптанса çитнĕ йăхлăх, тымарлăх, ĕмĕрлĕх, яланлăх шухăшлавĕсем нумайăшĕн чунне хускатрĕç, татах та тарăнрах шухăшлама хистерĕç. Тата çак тĕлпулăва пухăннисем - телейлисем. Мĕншĕн тесен вĕсем Марина Карягина сценарийĕ тăрăх ўкернĕ "Хĕвел çулĕпе" чăвашла фильмăн пĕрремĕш куракансем, пĕрремĕш хак паракансем пулчĕç.

Е.ПОЛЯКОВА.
("Хыпар" хаçатран).

# Кĕрешÿçĕсен династийĕ



## Похачевсем? Вĕсем механизаторсем

Амзяра çапла шутлаççĕ: эсĕ Похачев пулсан техникăна питĕ лайăх пĕлме, çичĕ хут тара ÿкиччен ĕçлеме тивĕç.

Çакăн пек хисепе вĕсем аслă Похачева - Анатолий пиччене пула тивĕç пулнă, вăл 40 çул хушши механизатор пулса ĕçлесе, "Комбайн" колхозра хăйне лайăх енчен кăтартнă. Ывăлĕсем те техникăпа интересленни тĕлĕнтермест. Малтан тракторпа Александр ĕçлеме тытăннă, кайран вара Юрий те: бригадира техника енĕпе пулăшакан пулса ĕçленĕ, халь хăй трактора çÿретет. Александр Анатольевич механизатор пулса 1976 çултанпа вăй хурать, вăл ЮМЗ-6 хуçи (сăнÿкерчĕкре). Хĕлле механизатор ытларах выльăхсем валли апат турттарать, кирлĕ пулсан ытти ĕçсене те пурнăçлать. Çуркунне тата çулла çитсен вара акана, кайран апат хатĕрлекен кампание хутшăнать, кĕркунне сахăр кăшманĕ кăларать.

Похачевсен интернационаллă çемйинче вицĕ ача ÿсет, вĕсенчен пĕри ашшĕ пекех механизатор пулĕ. Ашшĕ-амăшĕ хирĕç мар: Похачевсен хăйсен ятне ямалла мар, ял çыннисем те çапла шутлаççĕ, вĕсемпе килĕшмесĕр май çук.

Амзяри Гатинсем вара ял историне паттăрсем пек кĕрсе юлĕç. Шамиль Загитович (сăнÿкерчĕкре) ялта пулнă чылай акатуйри паттăр. Юлашки икĕ çулти сухапуç уявĕсенче те тĕп парнене вăл илнĕ. Риязпа Равиль ывăлĕсем те хăйсен вăйĕсене тĕрĕслеççĕ. Вĕсенчен пĕрремĕшĕн ăнăçлăхсем пур ĕнтĕ: çамрăк кĕрешÿçĕсен районти ăмăртăвĕнче вăл малти вырăнсенчен пĕрне йышăннă. Кĕрешÿçĕ характерĕ, пĕрремĕшĕ, чи лайăххи пулас тени Шамиль Загитовичăн ĕçĕнче те палăрать. Вăл трактор çине ларнăранпа çитес çул 20 çул çитет. Механизатор çак çулсем хушшинче ывăна пĕлми ĕçлет. Хĕлле фермăна пăрака, патка турттарать, çаплах ака ĕçĕсене, сахăр кăшманĕ кăларнă çĕре хутшăнать. Вăл ăçта вăй хурсан та мĕнпурне тăрăшса, питĕ лайăх тăвать. Çапла вара вăл ĕçре те чи лайăххи, пĕрремĕшĕ шутланать.

Гатинсем ашшĕ-амăшĕн çуртĕнче Фагима кинемейпе пĕрле пурăнаççĕ. Кунта вицĕ ăру килĕштерсе пурăнать: ватăсем, ачисем, мăнукĕсем. Хальхи вăхăтра çакăн пекки сайра тĕл пулать, вĕсене ял çыннисем те ăмсанаççĕ.

С.ХАЙРУЛЛИНА.
Н.Азизов сăнÿкерчĕкĕсем.



## Ыйту-хурав

**Эпир районти тавар туянакансен прависене хÿтĕлекен комитет председательне Р.Суфиянова вулакансем панă темиçе ыйту çине хуравлама ыйтрăмăр.**

### Çур çăкăр та сутма юрать

***Эпĕ пĕччен пурăнатăп, пĕр çăкăр мана нумай пулать. Хăш-пĕр чухне сутуçăсем ăна çурмалла касса памаççĕ. Тĕрĕс тăваççĕ-и вĕсем?***

*М., Нурлат хули*

0,4 тата ытлашши килограмлă çăкăра тата çăкăр изделийĕсене сутуçă тавар туянакан ыйтнипе çуршар тата çăкăрăн тăваттăмĕш пайне сутма пултарать. Кун пек чухне виçмелле мар.

### Каялла илмеççĕ

***"Апат-çимĕç таварĕсен хакĕсем улшăнсах тăраççĕ. Тавар туянакан туяннă апат-çимĕç таварĕсене вăхăт иртсен каялла магазина тавăрса пама пултарать-и?"***

*Е.С., Нурлат хули.*

Çук, кун пек тума юрамасть. Тавар пахалăхсăр, çаплах упрамалли срок тухнă пулсан çеç тавара каялла илеççĕ.

---

## Вĕрентÿ хыпарĕсем

# "Ровесник" пурăнать, ĕçлет

Нумаях пулмасть, "Ровесник" хăй 10 çул тултарнине паллă турĕ. Вунă çул каярах "Нурлатнефть" НГДУ тата чылай предприятисем пулăшнипе йĕркеленĕ çамрăксен клубне, социаллă педагогика комплексĕн шутĕнче ĕçленĕскере, улшăну хумĕ лекмен. "Татнефть" пĕрлешĕвĕн "Ровесник" клубĕ ыттисемпе танлаштарсан тĕреклĕ пулни питĕ тĕлĕнтерет. Хулари саккăрмĕш микрорайонти ачасем кунти занятисене кăмăлпах çÿреççĕ. Кунта çĕвĕ, драма, радиотехника кружокĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Клуб хальхи йывăр вăхăтра та ĕçленинче ачасен интересĕсемшĕн ыврăннине пĕлмесĕр тăрăшакан НГДУ тÿпи те сахал мар, çаплах клуб директорĕ С.Ф. Захарова та тăрăшуллă та пуçарулăскер, вăл кунта 10 çул ĕçлет ĕнтĕ. Клуб 10 çул тултарнă юбилей ячĕпе йĕркеленĕ мероприятире те çакăн çинчен каларĕç. Çав кун "Нурлатнефть" НГДУ профком хăнисем, тăваттăмĕш номерлĕ шкул представителĕсем - чăн-чăн уявăн свидетелĕсем пулчĕç.

Кашни кружок хăйнеевĕрлĕ салам хатĕрленĕччĕ, çаплах хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç: мода, концерт кăтартрĕç. Хăнасемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕсем те, хăйсем те малаpах "Ровесник" клуба çÿренĕскерсем, ырă сăмахсем сахал мар каларĕç.

**Р.ГИНЯЕВА,**
**хулари 4-мĕш номерлĕ шкул директорĕ.**

## Майорпа тĕл пулнă

Иртнĕ эрнере 4-мĕш номерлĕ шкулти милици лицей-класĕнче вĕренекенсем ТР шалти ĕçсен Министерствин çула çитмен ачасем хушшинче преступлени тăвассине сирсе ярас тĕлĕшпе ĕçлекен управленин сотрудникĕпе милици майорĕпе Р.Р.Зариповпа тĕл пулчĕç. Вăл милици ĕçĕнчи йывăр задачăсем çинче чарăнса тăчĕ, лицей-класĕсене вĕренÿпе воспитани процесне кирлĕ шайра йĕркелесе яма пурлăх енчен пулăшма шантарчĕ.

# Шкулта вĕрентеççĕ...

Çапла ачасене шкулта теме те вĕрентеççĕ. Кăна кашни пĕлет. Педагогика ĕçĕн процесĕ вăхăтĕнче учительсем хăйсем те вĕреннине вара пурте пĕлмеççĕ пулĕ. Вĕсем яланах творчество шыравĕнче, вĕренÿпе воспитани процесне аталантармалли çĕнĕ формăсемпе меслетсем шыраççĕ, ĕçтешĕсемпе ĕç опычĕпе улшăнаççĕ. Çак ĕçĕн формисем тĕрлĕ: уçă уроксем, семинарсем, канашлусем, методика пĕрлешĕвĕсен ларăвĕсем. Кăçал вара хулари 1-мĕш номерлĕ шкулта преподавательсен професси ăсталăхне ÿстерес тĕллевпе, опытпа улшăнас тĕлĕшпе уйăхлăх ирттересси çинчен пĕлтернĕ. Унăн тĕллевĕ - творчествăлла ĕçлекен педагогсен опычĕпе çамрăк учительсене паллаштарасси, вĕсене пулăшу парасси. Планпа палăртнă тăрăх ку уйăхра уçă уроксем çеç мар, класс тулашĕнче тĕрлĕ мероприятисем те ирттерĕç.

Уйăхлăх питĕ активлă пуçланнă. Ертÿçĕ-учитель В.Л.Динеев 10"Г" класра физика урокне, Ф.Г.Алькова 5"В" класра акăлчан чĕлхин урокне питĕ интереслĕ ирттернĕ. Çаплах Г.С.Валиуллина 6"Г" класра ирттернĕ тутар чĕлхипе литература урокĕ те çамрăк учительсемшĕн питĕ интереслĕ пулнă. Класс тулашĕнчи мероприятие Е.И.Казаева питĕ интереслĕ те илĕртÿллĕ йĕркеленĕ.

Уйăхлăх пуçланнă кăна-ха. Унăн планĕ питĕ пуян. Çитес çывăх вăхăтра ытти учительсем те çамрăк учительсене хăйсен опычĕпе паллаштарĕç.

## Кил-çурт, хушма хуçалăх

Тĕрлĕрен калаççĕ халăхра çак ÿсентăрана - бузина, упа паланĕ, улпут çырли. Çапах та унăн уссине çителĕклех пĕлменнипе-ши, сад-пахчара ытлах лартсах каймаççĕ. Кăлăхах. Мĕншĕн тесен пур енчен те ыррипе кăна палăрать вăл.

# Пур енчен те усăллă

Чи малтанах халăх медицини унпа тĕрлĕ чир-чĕртен сипленмешкĕн усă курма сĕнет: ÿслĕкрен, пÿре чирĕнчен, ревматизмран, артритран, ÿт-тир чирĕсенчен, вархырăма лайăххрах ĕçлеттерме тата ытти те. Çырлипе апат-çимĕç, варени-компот хатĕрлемешкĕн усă кураççĕ.

Халăхра сарăлнă тепĕр ырă енĕ унăн - кăшлакан чĕр чунсене пĕтерме пулăшни. Юнашар упа паланĕ ÿсекен ампарсенче шăши, йĕке хÿре тавраш пулмасть. Упа паланĕн чечекĕсене пÿртре тытсан, таракансем те тарса пĕтнине çирĕплетеççĕ хăшĕсем. Çапла вара вун-вун ырă енĕпе палăракан çак ÿсентăрана сад-пахчара е кил çывăхĕнче ÿстермех сĕнес килет.

Бузинан чечекĕсемпе хуппинче валериана кислоти пур. Çавăнпа та ăна кушак тавраш питĕ килĕштерет, чечекĕсене те, хуппинне те çиме пултарать. Çавна май упа паланĕ лартса чĕртес текенсен çамрăк хунавсене кушаксенчен хÿтĕлеме тăрăшмалла.

Упа паланĕ вăрăран та, хунавран та, сапанран та, тĕмсене пайласа лартсан та аван ÿсет. Хăшĕ-пĕри ăна хурлăхан вулли пек те лартса чĕртет.

Ÿсентăран ачаш мар, тăпрана тиркемест, шăрăха та, сивве те тÿсĕмлĕ. Хĕвел çинче те, сулхăн вырăнта та аван ÿсет.



# Декабрь

Авалхи римлянсен декабрь уйăхĕ çулталăкра вуннăмĕш уйăх пулнă, çавăнпа та децембер (латин сăмахĕнчен - "децем" - вуннă) ятлă пулнă. Авалхи вырăсла ячĕ - "студень" (сивве пула пĕтĕмпех шăнать, сивĕнет). Тепĕр ят та пулнă - хмурень (пĕлет час-часах ăмăрланать).

Уйăхри вăтам температура 8 градус сивĕ, вăл 38,8 градусран (1892 çул) 1,4 градус (1932 çул) пулнипе те палăрнă. Юр сийĕ тĕпрен илсен ноябрĕн 27-мĕшĕнче хупланса çитет пулсан, чи ир хупланнă вăхăт 1934 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕ пулнă, чи кая юлса ларни 1925 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕ пулнă.

Чăвашла декабре раштав тетпĕр.

Декабрьте тĕтреллĕ, юр куписем йышлă пулсан, çĕр хытă шăнсан - тырă тухăçлă пулать теççĕ. Енчен те юр картасем çумнех тулать пулсан - çу начар килет, юр кĕрчĕсемпе карта хушшине вырăн юлса пырсан - çу аван пулать.

Декабрьти кунсем тăрăх вăл мĕнле пуласси не пĕлме пулать.

1 - кун тăршшĕнче çанталăк улшăнсан, хĕл те çавăн чухлех улшăнса тăрать.

9 - çăлсенчи шыв шăп пулсан - хĕл ăшă пулать, ăснă чух хыттăн шампăлтатсан - сивĕ çил-тăмансем, шартлама сивĕсем пулаççĕ.

18 - тĕтĕм пĕлĕтелле тӳрĕ çĕкленсен - сивĕ, уяр, çĕрелле анса сарăлсан - ăмăрлă çанталăка.

25 - çутă, янкăр çанталăк тăрсан, Çĕнĕ çул сивĕ, уяр пулать, ăмăр тăрсан - юрлă çанталăка кĕт.

26 - çак кунран пуçласа 12 кун тăршшĕ çанталăка сăнаса тăмалла: кашни кунĕ çитес уйăхри çанталăка пĕлтерет, 26 декабрьти - январь уйăхне, 27-мĕшĕ - февральтине, 28-мĕшĕ - мартри çанталăка, çапла майпа январь 7-мĕшĕчченех.

## ТАВ ТĂВАТĂП

**Улма-çырла питомникĕн директорне Владимир Петрович Сафандеева мана укçа-тенкĕпе пулăшнăшăн чун-чĕререн тав тăватăп.**

**Л.КАДЫРОВА,**
**I ушкăнри инвалид.**

* Салтак юррисем

## Ан хурлан-ха, чунăм, ан çун, чĕрем

Шыв хĕрринче çӳçе, ай, ӳсет-çке,
Ун айĕнче çырла пиçет-çке.
Çав çырланăн мĕншĕн, ай, тути çук?
Шыв сулхăнĕпеле ӳснĕрен.
Пирĕнех те мĕншĕн хĕрлĕ сăн çук?
Йывăр хуйхă курса ӳснĕрен.

Çӳлĕ кăна тăвăн аяккинче
Шăнкăртатса юхать çăл шывĕ.
Хытă тесен хытă çын аллинче -
Çăл шывĕ пек юхать куççулĕ.

Ан кашла-ха, вăрман, ан шавла-ха,
Çамрăк чуна ытла ан хускат.
Ан хурлан-ха, чунăм, ан çун,
чĕрем,
Хура çӳçе яшлах ан шурат.

Аслă урам варрипе, ай, аслă çул,
Аслă çул хĕррипе сар чечек.
Пусаймарăм, тăвансем,
çӳреймерĕм,
Мана ыр сунакансем çӳреччĕр.

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.

## Мĕн чухлĕ "ватăрах" - çавăн чухлĕ тутлăрах

*Сăмах купăста çинчен пырать. Ытти çимĕçсемпе танлаштарсан, йӳçĕтсен çак культурăн тутлăхлă япалисем чакмаççĕ, вăл тĕрлĕ элементсемпе пуянланать çеç.*

*Халăхра ăна чĕрелле те, йӳçĕтсе çиме те тăрăшаççĕ. Ахаль меслетпе йӳçĕтнипе пĕрлех ытти тĕрлĕ майпа та "тутлăлантарма" пулать.*

*Тĕслĕхрен:*

### Венгрла купăста

Вĕтетнĕ купăстана вĕри шыва ярса 5-10 минут лартмалла. Шывне тăкнă хыççăн купăстана сивĕтмелле, 2 е 3 литр кĕрекен кантăк банкăна тултармалла, тăвар хушмалла. Çиелтен çĕпре тĕпретсе 30-35 градус ăшă шыв ямалла. Унтан банкăсене ăшă вырăна лартмалла. Тепĕр икĕ кунтан купăста çиме юрăхлă пулать. Ăна сулхăн вырăнта упрамалла.

Пĕр килограмм купăста пуçне 25 грамм тăвар, 2 грамм çĕпре илмелле.

### Провансаль купăста

Йӳçĕтнĕ купăста пуçĕсене 2,5х2,5 сантиметр пысăкăш туса вĕтетмелле, песук, çатма çинче вĕрилентерсе сивĕтнĕ тип çу, мăк çырли е кĕтмел çырли, йӳçĕтнĕ панулми касăкĕсем хушса пăтратмалла. 30-40 минутран тепĕр хут лайăх пăтратса çиме лартма юрать.

### Маринадлă купăста

Вĕттĕн туранă купăстана тăвар хушса эмаль савăта тултармалла /кашни килограмм купăста пуçне 20 грамм тăвар/ пăтратса икĕ сехет лартмалла. Унтан таса кантăк банкăна лавр çулçи, хура пăрăç пĕрчи, гвоздика ямалла, купăста тултармалла. Çиелтен 90-95 градус вĕри маринад ямалла /855 миллилитр шыв, 60 грамм песук, 60 грамм тăвар, 20 миллилитр уксус эссенцийĕ/. Банкăсене стерилизацилемелле: çур литрлине - 20 минут, 1 литрлине - 30, 3 литрлине - 40 минут хушши, унтан тимĕр хупăлчапа хупласа лартмалла.

Виçе: 650 грамм купăста, 350 миллилитр маринад шывĕ, 2-3 гвоздика, 2-3 пăрăç пĕрчи, 0,1 грамм корица, 1 лавр çулçи.

## Экспресс - центр таварсемпе услугăсем сĕнет

- Компьютерсемпе оргтехника (ксерокссем, факссем тата ытти те)
- ПЭВМ тата оргтехникăн комплектлакан тата тăкаклакан материалĕсем
- вырăнти шутласа кăларакан сетьсене вырнаçтарасси
- компьютерсене тата оргтехника гаранти вăхăтĕнче тата гаранти иртнĕ хыççăн пăхса тăрасси
- ПЭВМ, оргтехника юсасси тата модернизацилесси
- йăла аппаратурине (телевизорсем, аудио- тата видеомагнитофонсем, видеокамерăсем, музыка центрĕсем тата ытти) юсасси
- ксерокопировани (ф.А4) услугисем
- текстлă документсене пуçтарасси тата пичетлесси
- машинăпа ĕçлеме вăхăт парасси (ПЭВМпа ĕçлесси)
- фотопленкăсене проявить тăвасси тата тĕрлĕ тĕслĕ сăнӳкерчĕксем (ф.10х15) пичетлесси
- документсене валли хура-шурă тата тĕрлĕ тĕслĕ сенӳкерчĕксем самантрах хатĕрлесси (2,5х3,5 тата 3,5х4,5)
- фототаварсем (пленкăсем, батарейкăсем, альбомсем, фотоаппаратсем тата ытти те)
- техника тата илемлĕ литература.

### Договорсем тăватпăр

- ***ПЭВМ техника енчен тивĕçтересси***
- ***программа тивĕçтерĕвне пĕрле пурнăçласси***
- ***ятарлă программа тивĕçтерĕвне ĕçлесе хатĕрлесе хута ярасси.***

* * *

**Республикăри НИОКР фончĕн тĕп предприятийĕ НИОКР ĕçлесе хатĕрлес, хута ярас, илемлетес тĕлĕшпе тĕрлĕ услугăсем парать.**

*Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, 8, Экспресс-Центр, 8 сехетрен пуçласа 18 сехетчен, апат вăхăчĕ 13 сехетрен пуçласа 14 сехетчен. Телефон: 5-37-51.*

* * *

**Экспресс-Центр тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан кивĕ телевизорсен кинескопĕсене йышăнать.**

## Пĕлтерӳсем

### Тĕрли:

***Ноябрĕн 11-мĕшĕнче каçпа шурă çинче сăрă паллăсемлĕ кушак аçи çухалнă. К.Маркс урамĕнчи 4-мĕш çуртри 33-мĕш хваттере пырса пама ыйтатпăр. Парне пулать.***

* * *

***35 тенкĕрен пуçласа Çĕнĕ çул парнисем хатĕрлетпĕр. Телефон: 5-39-39.***

* * *

***Мускавран килнĕ çемье вăрах вăхăта виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер тара илет (хула варринче, АТП çывăхĕнче пулсан лайăхрах). Телефон: 2-19-84.***

* * *

***Валерий Николаевич Широков ячĕпе панă документсемлĕ тĕттĕм-хăмăр тĕслĕ визитка тупакана Лачака ялĕнчи Михаил Михайлович Мондрейкина пырса пама ыйтатпăр. Тупакана хаклă парне кĕтет.***

* * *

***Шипланă авторезина сутатпăр. Авторезина шиплатпăр. Çăмăл автомашина авторезинисене сутăн илетпĕр. Телефонсем: 2-35-59, 5-35-91, 17 сехет хыççăн. Лицензи Б-97, номерĕ - 28882.***

* * *

***Çăнăх, сахăр сутăн илетĕп. Телефон: 2-11-13.***

### Сутатпăр:

***Çывăрмалли пӳлĕм валли гарнитур (усă курнă). Телефон: 2-12-51.***

* * *

***Приватизациленĕ икĕ пӳлĕмлĕ хваттер. Телефон: 2-21-98.***

## Аксеновăн Бизнес Шкулĕн Хусанти филиалĕ вĕрентет:

- ***ПЭВМ операторĕсене (Windows, Offisse 97)***
- ***BASIC чĕлхипе программăламалли никĕссем***
- ***FOXPRO чĕлхипе программăламалли никĕссем***
- ***PASCAL чĕлхипе программăламалли никĕссем (11-мĕш класра вĕренекенсем валли)***

***Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, 8, Экспресс-центр, 8 сехетрен пуçласа 18 сехетчен. Апат вăхăчĕ 13 сехетрен пуçласа 14 сехетчен. Телефон: 5-37-51.***

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***
***Пирĕн патра кăна!***

***Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!***

***Сипленĕ кунсенче, эрнекунсенче, декабрĕн 11, 25-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 12 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.***

**Нурлат хулипе район администрацийĕ, халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕ администраци пуçлăхĕн экономика тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕн Фарит Нилович Губайдуллинăн ашшĕ Нил Муртазович вилнĕ пирки унпа пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.**

**Районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçат редакцийĕ хула тата район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕн Фарит Ниловичи Губайдуллинăн ашшĕ Нил Муртазович Губайдуллин вилнипе унпа, унăн çемйипе çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.**

**Районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçат редакцийĕ маларах редактор пулса ĕçленĕ, 60-80-мĕш çулсенче хаçат сотрудникĕ пулнă, юлашки çулсенче Хусан хулинче пурăннă Наиль Инсафович Хайрутдинов вăрах вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн, 62 çул тултарсан вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.**

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893.